# СӐВАПЛӐ ПАВЕЛ АПОСТОЛ ФЕССАЛОНИКӐРИ ЁНЕНЕКЕНСЕМ ПАТНЕ ЯНӐ ИККӖМӖШ ҪЫРУ

## 1-мӗш сыпӑк

*Саламлани*

[1] Павелпа Силуанран тата Тимофейран – Атте Туррӑмӑрпа
тата Иисус Христос Хуҫамӑрпа пӗрлӗхлӗ Фессалоникӑри чиркӗ-
ве. [2] Сире пурне те Атте Туррӑмӑрпа Иисус Христос Хуҫамӑрӑн
ырӑлӑхӗпе канӑҫлӑхӗ пултӑр.

*Христос тепре килсен пулас суд*

[3] Сирӗншӗн, тӑвансемӗр, пирӗн яланах Турра тав тумалла.
Ҫапла туни тӗрӗс пулӗччӗ, мӗншӗн тесен сирӗн ӗненӗвӗр ҫирӗп-
ленсех пырать, сирӗн хушшӑрта пӗр-пӗрне юратасси те ӳйлан-
сах пырать. [4] Ҫавӑнпа эпир Туррӑн чиркӗвӗсенче сирӗнпе мухта-
натпӑр: эсир хӗсӗрлевпе хӗн-хура чӑтӑмлӑн та ӗненӳллӗн тӳссе
ирттернӗшӗн сирӗнпе мухтанатпӑр. [5] Эсир хӗн-хур тӳсни Туррӑн
тӳрӗ сучӗ пулассине пӗлтерет; эсир хӑвӑра тивӗҫес Турӑ Патша-
лӑхӗшӗн тӳсетӗр. [6] Мӗншӗн тесен Турӑ тӗрӗслӗхлӗ: сире хӗн-хур
кӑтартакансене хуйхӑ-суйхӑ тавӑрса парӗ, [7] сире вара, хӗн-хур тӳ-
секенсене, Иисус Хуҫамӑр Хӑйӗн хӑватлӑ ангелӗсемпе тӳперен
килнӗ чухне Турӑ пирӗнпе танах канӑҫлӑх парӗ. [8] Ун чухне Турра
пӗлес теменнисене, Иисус Христос Хуҫамӑрӑн Ырӑ Хыпарне
пӑхӑнас теменнисене вутланакан ҫулӑмра тавӑру пулӗ. [9] Вӗсене

Христос Хуçамӑртан тата Унӑн хӑватлӑ мухтавӗнчен яланлӑхах
уйӑрса ӗмӗрлӗх вилӗмпе айӑпланмалла тӑвӗç. 10 Çав юлашки кун
Вӑл килӗ те мӗн пур ӗненекенӗсем Хӑйне савӑнса-тӗлӗнсе мухта-
нине курӗ. Эпир пӗлтернӗ Ырӑ Хыпара ӗненнӗрен эсир те мух-
такансем хушшинче пулӑр. 11 Çавӑнпа та эпир яланах сирӗншӗн
кӗлтӑватпӑр: Туррӑмӑр сире мӗншӗн суйласа илнӗ, çавна тивӗçлӗ
тутӑрччӗ; ырӑ тума та, ӗненӗве ӗçпе çирӗплетме те вӑй патӑрччӗ
тетпӗр. 12 Çапла майпа, эсир тӑрӑшнине пула, Иисус Христос
Хуçамӑр ячӗ мухтавлӑ пулӗ. Туррӑмӑрӑн тата Иисус Христос Ху-
çамӑрӑн ырӑлӑхӗпе вара эсир те Ун урлӑ мухтава тухӑр.

## 2-мӗш сыпӑк

*Турра хирӗç çын*

1 Тӑвансем! Иисус Христос Хуçамӑр килесси пирки тата хамӑр
Ӑна кӗтсе илесси пирки вара çакна йӑлӑнсах ыйтатпӑр: 2 иккӗ-
ленме ан васкӑр. Христос килес кун çитрӗ те ӗнтӗ тесе пророкла
калани те, сас-хура та, пирӗн ятпа тесе çырнӑ çыру та сире пӑт-
раштарса ан ятӑр. 3 Никам та нимӗнле майпа та сире улталама ан
пултарайтӑр. Мӗншӗн тесен çав юлашки кун çитиччен маларах
Турра хирӗç пысӑк пӑлхав пулмалла, çылӑх çынни — пӗтеслӗх
ывӑлӗ — килмелле. 4 Çавскер мӗн пуррине йӑлтах хирӗçлӗ. «Ту-
рӑ», «сӑваплӑх» тетпӗр эпир. Вӑл вара хӑйне вӗсенчен те çӳле ху-
рӗ. Турӑ Çуртне вӑл Турӑ пек кӗрсе ларӗ те хӑйне Турӑ тесе пӗл-
терӗ. 5 Çапла пуласса эпӗ сирӗн патӑрта чухнех сире каласаттӑм.
Астумастӑр-и? 6 Хӑйӗн вӑхӑчӗ çитиччен Турра хирӗç çав çын мӗн-
шӗн палӑрманнине эсир халӗ пӗлетӗр. 7 Усалӑн ӗçӗсем вӑрттӑн
пуçланнӑ та ӗнтӗ, анчах халӗ ӑна чарса тӑраканӗ пур. Çав чарса
тӑракана сириччен нимех те пулмалла мар-ха. 8 Чарса тӑракан-
нине сирсессӗн вара Турра хирӗç çын килӗ. Анчах та Иисус Ху-
çамӑр ӑна Хӑйӗн çӑварӗнчи сывлӑшӗпех çапса антарӗ, Хӑй иккӗ-
мӗш хут килнипе пӗтерӗ. 9 Турра хирӗç çын килесси шуйттан тӑ-
рӑшнипе пулӗ. Килессе вӑл шуйттанла вӑйпа, суя паллӑсемпе
хӑватсем кӑтартса, 10 тӗрлӗрен суя-ултавпа килӗ. Хӑйсене çӑлӑнӑç
кӳрекен чӑнлӑха юратман пирки пӗтес çул çине тӑнисене вӑл хӑй
майлӑ çавӑрӗ. 11 Çавӑнпа Турӑ вӗсене ултав аллине парӗ, вӗсем
ӗнтӗ суялӑха ӗненӗç. 12 Чӑнлӑха ӗненес вырӑнне суялӑха юратакан-
сене пурне те суд кунӗнче айӑплав пултӑр тесе Турӑ çапла тӑвӗ.

*Сире ҫӑлса хӑвармашкӑн суйласа илнӗ*

[13]Хуҫа Турӑ савакан тӑванӑмӑрсем! Пирӗн сирӗншӗн Турра тӑ-
тӑшах тав тумалла. Мӗншӗн тесен Турӑ сире Святой Сывлӑшпа
сӑваплатса, чӑнлӑха ӗнентерсе ҫӑлса хӑвармашкӑн чӑн малтанах
суйласа илнӗ. [14]Иисус Христос Хуҫамӑрӑн мухтавӗ сире те ти-
вӗҫтӗр тесе, эпир вӗрентекен Ырӑ Хыпар урлӑ ҫӑлса хӑварма
Турӑ сире чӗнсе илнӗ. [15]Эппин, тӑванӑмӑрсем, тӗреклӗ тӑрӑр.
Эпир сире сӑмах вӗҫҫӗн е ҫыру урлӑ панӑ вӗрентӗве ҫирӗп тытса
пырӑр. [16]Хӑйӗн ырӑлӑхне пула пире савса ӗмӗрлӗх хавхалану
тата ырӑ шанчӑк панӑ Иисус Христос Хуҫамӑрпа Атте Туррӑмӑр
[17]сирӗн чун-чӗрӗре лӑплантартӑр, калас ырӑ сӑмахпа тӑвас ырӑ
ӗҫ валли ҫирӗплӗх патӑр.

**3-мӗш сыпӑк**

*Пирӗншӗн кӗлтӑвӑр*

[1]Ҫапла ӗнтӗ, тӑвансемӗр, пирӗншӗн кӗлтӑвӑр. Хуҫамӑрӑн сӑ-
махӗ сарӑлнӑҫемӗн сарӑлса пытӑрччӗ, хӑвӑр патӑрти пекех мух-
тавлӑ пултӑрччӗ. [2]Тата Турӑ пире пӑсӑк та усал ҫынсенчен хӑ-
тартӑрччӗ тесе кӗлтӑвӑр, мӗншӗн тесен ӗненӳ пурин те ҫук-ха.
[3]Анчах та Хуҫамӑр шанчӑклӑ. Вӑл сире ҫирӗплӗх парса усалтан
упраса хӑваратех. [4]Эсир Хуҫамӑрпа пӗрлӗхлӗ пулнӑран эпир
сире мӗн хушнине пурнӑҫланине, малашне те пурнӑҫласса ша-
натпӑр. [5]Хуҫамӑр сире Хӑйӗн юратулӑхӗ патне, Христос чӑтӑм-
лӑхӗ патне ҫул кӑтарттӑр.

*Наянлӑхран асӑрхаттарни*

[6]Эй, тӑвансем! Иисус Христос Хуҫамӑр ячӗпе эпир сире хис-
тесех ҫакна калатпӑр: наянланса пурӑнакан тӑванӑрсенчен пӑ-
рӑнса ҫӳрӗр. Вӗсем эпир вӗрентнӗ пек пурӑнмаҫҫӗ. [7]Пирнешкел
пурӑнмаллине эсир хӑвӑрах пӗлетӗр. Эпир вара сирӗн патӑрта
ӗҫсӗр ларман, [8]никамӑн татӑк ҫӑкӑрне те тарам ҫимен. Сире чӑр-
мав кӳрес марччӗ тесе ҫӗрӗн-кунӗн ӗҫ ӗҫлесе пурӑнтӑмӑр. [9]Пал-
лах, ӗненекенсен шучӗпе пурӑнма пирӗн ирӗк пур, анчах та,
сирӗншӗн тӗслӗх пулас тесе, эпир хамӑра хамӑр тӑрантарса пу-
рӑнтӑмӑр. [10]Сирӗн патӑрта пурӑннӑ чухнех эпир сире ҫапла
вӗрентеттӗмӗр: «Кам ӗҫлемест, ҫав ҫимест». [11]Анчах та сирӗн

патӑрта хӑшӗ-пӗрисем ӗҫлеме ӳркенеҫҫӗ, ӗҫрен тарма тӑрӑшаҫҫӗ
текен сас-хура пирӗн хӑлхана та кӗчӗ. 12 Унашкаллисене Иисус
Христос Хуҫамӑр ячӗпе пули-пулми сӑмах вакламасӑр ӗҫлеме,
хӑйсене хӑйсем тӑрантарса пурӑнма ӳкӗтлетпӗр. 13 Эсир вара,
тӑвансем, ырӑ туса пурӑннӑшӑн ан хуйхӑрӑр. 14 Ҫак ҫырури сӑ-
махсене кам та кам пӑхӑнас темест, астуса юлӑр та, ӑна намӑс
пултӑр тесе, унпа хутшӑнса ан пурӑнӑр. 15 Анчах та ӑна тӑшман
вырӑнне ан хурӑр, тӑвана ӳкӗтленӗ пек ӳкӗтлӗр.

*Пиллени*

16 Сире канӑҫлӑх Турри Хӑй пур енчен те яланах канӑҫлӑх па-
тӑр. Хуҫа Турӑ сирӗнпе пуринпе те пултӑр.

17 Ҫырусене чӑнласах хам янине паллӑ тумашкӑн эпӗ, Павел,
хам аллӑмпах ҫапла ҫырса саламлатӑп. 18 Сире пурне те Иисус
Христос Хуҫамӑрӑн ырӑлӑхӗ пултӑр. Аминь.